


Раштавăн 10-мĕшĕнче И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн тĕп корпусĕнче çĕнĕ ректор суйлас ыйтупа конференци иртнĕ.

Вăрттăн сасăлавра Андрей Александров мала тухнă, 221 делегатран 207-шĕ уншăн сасăланă.

А.Александров 1966 çулта Краснодар тăрăхĕнчи Майкоп хулинче çуралнă. Ашшĕ те, амăшĕ те Чăваш Республикинчен пулнăран Александровсем тăван ене куçса килнĕ. Çĕрпӳри 1-мĕш вăтам шкулта вĕреннĕ хыççăн Андрей Юрьевич - çар хĕсметĕнче, 1990 çулта ЧПУра историк специальноçне алла илет. 1997 çулта юриспруденци енĕпе çак заведенирен вĕренсе тухать. Унăн - 60 ытла ăслăлăх ĕçĕ. Вĕсенче вĕренӳ тытăмĕн ертсе пырас, социллă хӳтлĕх ыйтăвĕсене, патшалăх органĕсенчи правăна йĕркелес ĕç-хĕле çутатнă.

Андрей Александров - экономика ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент. 2000 çулта - ЧР Патшалăх Канашĕн Аппарачĕн ертӳçи. 2000-2009 çулсенче - ЧПУ ректорĕн пулăшуçи, ректорат секретарĕ. 2010 çултанпа - вĕренӳ енĕпе ĕçлекен проректор, кафедра пуçлăхĕ.

Çĕнĕ должноçа вăл хăйĕн кандидатурине РФ Вĕренӳпе ăслăлăх министерстви çирĕплетнĕ хыççăн йышăнĕ.

**Ирина ИВАНОВА.**

**Геннадий ВЕРБЛЮДОВ**

**сăн ӳкерчĕкĕ**